27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 15 ШĂМАТКУН 139(6634) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн ҫарĕсем, ЯСЕЛЬДА тата ПРИПЯТЬ шывĕсем урлă каҫса, паян, июлĕн 14-мĕшĕнче, Днепр ҫинчи шыв-ҫар флотилийĕ пулăшса тăнипе, совет Белоруссийĕн область центрне — ПИНСК хулине—нимĕҫсен Брест енчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне штурмласа туртса илнĕ.

ПИНСК хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче БЕЛОВ генерал-лейтенантăн, ЯНОВСКИЙ генерал-майорăн, ШМЫГЛЕВ полковникăн, БАСТЕЕВ полковникăн, АНДОНЬЕВ полковникăн, МОЩАЛКОВ полковникăн, ТУРЧИНСКИЙ генерал-майорăн. ҫарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ЕГОРОВăН, ВОСКРЕСЕНСКИЙ полковникăн, ГОРОДОВЕНКО полковникăн, БУЛАТОВ полковникăн, СТАРОСТИН полковникăн, ИВАНОВ подполковникăн, ПОНОМАРЕНКО полковникăн артиллерисчĕсем; ВОЙЦИН полковникăн танкисчĕсем; ГРАЩЕНКО полковникăн, СМИРНОВ подполковникăн летчикĕсем; 1-мĕш рангри капитанăн ГРИГОРЬЕВăН, II-мĕш рангри капитанăн ЛЯЛЬКОН, II-мĕш рангри капитанăн МИТИНăН, III-мĕш рангри капитанăн ПЕСКОВăН, МИХАЙЛОВ капитан-лейтенантăн, СЕЛЯНКИН капитан-лейтенантăн, ЛУПАЧЕВ капитан-лейтенантăн Днепр ҫинчи шыв-ҫар флотилийĕн чаҫĕсем; АФАНАСЬЕВ полковникăн, ПАВШУК полковникăн, КОЗЛОВ майорăн саперĕсем тата ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн ЛИТВИНЕНКăН, ПОЗДНЯКОВ инженер-подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЯСЕЛЬДАПА ПРИПЯТЬ шывĕсем урлă каҫнă чухне тата ПИНСК хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах палăрнă соединенисемпе чаҫсене «ПИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян июлĕн 14-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăвататă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ПИНСК хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ПИНСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТăВАТăП.

Хамăрăн Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан ҫапăҫусенче вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.
1944 ҫулхи июлĕн 14-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронтăн ҫарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, июлĕн 14-мĕшĕнче, ВОЛКОВЫСК хулипе пысăк чугун ҫул узелне—нимĕҫсен оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне, БЕЛОСТОК патне каймалли ҫулсене хӳтĕлесе тăраканскерне, туртса илнĕ.

ВОЛКОВЫСК хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ГОРБАТОВ генерал-полковникăн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорăн, УРБАНОВИЧ генерал-майорăн, ПАНЧУК генерал-майорăн, КУБАСОВ генерал-майорăн, ФОГЕЛЬ генерал-майорăн, ВЕРЕВКИН полковникăн, МИХАЛИЦЫН полковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВăН, артиллери генерал-майорĕн ДЕГТЯРЕВăН, МЕДВЕДЕВ полковникăн, КАНДИДАТОВ полковникăн, МУДРЕНКО подполковникăн, ГОРОДНИЧИЙ подполковникăн, ОРЛОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ШИРОБОКОВăН, АПАРИН полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн ГЕТМАНăН, ВОЛКОВ полковникăн, СМОЛОВИК полковникăн, КОЛОМИН подполковникăн, КАЗАЧЕНКО подполковникăн летчикĕсем; ШИТИКОВ полковникăн, САКС майорăн саперĕсем тата ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн МИШИНăН, КУРТУКОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВОЛКОВЫСК хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «ВОЛКОВЫСКСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян июлĕн 14-мĕшĕнче, 23 сехетре, пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, ҫĕр ҫирĕм тăвататă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ВОЛКОВЫСК хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ВОЛКОВЫСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТăВАТăП.

Хамăрăн Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан ҫапăҫусенче вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.
1944 ҫулхи июлĕн 14-мĕшĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Промысла кооперации артелĕсен тата пурăнмалли ҫуртйĕрпе коммунальнăй хуҫалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 ҫулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсем ҫинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, промысла кооперации артелĕсен тата пурăнмалли ҫуртйĕрпе коммунальнăй хуҫалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ҫапла йышăннă:

Промысла кооперации артелĕсен ăмăртăвĕнче Шупашкарти «Пекарь», Улатăрти «Красный восход», Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан артельсем мала тухнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Улатăрти «Красный восход» артельтен илсе, Шупашкарти «Пекарь» артеле (правлени председателĕ Молчанов юлташ, хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) памалла тунă тата ăмăртура палăрнă работникĕсене премилеме 8.000 тенкĕ памалла тунă. Улатăрти «Красный восход» артеле иккĕмĕш премии — 5.000 тенкĕ, Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан артеле виҫҫĕмĕш премии — 3.000 тенкĕ памалла тунă.

Июнь уйăхĕнче Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан, Йĕпреҫри «Красный строитель», Абаккассинчи Горький ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕҫлеменнине палăртнă.

Пурăнмалли ҫуртйĕрпе коммунальнăй хуҫалăх предприятийĕсен ăмăртăвĕнче Канашри ҫул ҫӳрекенсен ҫуртĕ мала тухнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Шупашкарти коммунальнăй парикмахерскинчен илсе, Канашри ҫав ҫурта памалла тунă. Ҫавăнпа пĕрлех ăна мала тухнă пыракан работникĕсене премилеме 5.000 тенкĕ укҫа памалла тунă.

Ҫĕрпӳ хули совечĕн исполкомне, хулари парка юсас тĕлĕшпе пысăк ĕҫсене пурнăҫа кĕртнĕскерне, ҫав ĕҫре палăрнă ҫынсене премилеме 2.000 тенкĕ расходлама ирĕк панă.

Чехов произведенийĕсене художествăллă пултарулăх коллективĕсем валли пичетлесе кăларнă

«Молодая гвардия» издательство А. П. Чехов вилни 40 ҫул тултарнă кун тĕлне художествăллă пултарулăх коллективĕсем валли писателĕн суйласа илнĕ произведенийĕсене пичетлесе кăларнă.

Сборник пуҫламĕшĕнче савăнăҫлă канăҫ программине ертсе пыраканăн малтан калламалли сăмахне, «Чехов с нами» ятлăскерне, пичетленĕ. Унта аслă писателĕн пурнăҫĕпе пултарулăхĕ ҫинчен каласа панă. А. М. Горькийĕн асаилĕвĕсенчен илсе пичетленĕ татăксем савăнăҫлă каҫа пухăннă ҫынсене Чехов мĕнле художник тата мĕнле ҫын пулнипе паллаштараҫҫĕ.

Сборнике 100.000 экземпляр пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 13-мĕшĕнче КОНДОПОГА хулинчен хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем Карел-Финн ССР-ĕнчи район центрне СУОЯРВИ хулине тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 20 пункта ытла йышăннă, ҫав шутра — АХВЕНСЕЛЬКЯ, РИУТТАВРА, НАЙСТЕНЯРВИ, ЛАХТИСЕЛЬКЯ, КАРАТЦАУЛИ ятлă пысăк ялсем тата ПАПЕРО чугун ҫул станцийĕ.

НОВОРЖЕВ хулинчен хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем Калинин облаҫĕнчи район центрне ПУШКИНСКИЕ ГОРЫ ятлă яла тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, ҫав шутра — ВОРОНИЧ, ЛУГОВО, НОТАХНОВО, ГАРИНО, ЧУХНЫ ятлă пысăк ялсем тата ТРИГОРСКАЯ чугун ҫул станцийĕ.

ИДРИЦА хулинчен ҫурҫĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн ҫарсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, ҫав шутра — МИНЬКОВО, ПЕЛАГЕИНО, ЛАПТЕВО, ПУХЛЫ, РУБЫ, ИВОНИНО, МАЦКОВО, СТАРЫЙ ПРУД, ЗАЛУЧЬЕ ятлă пысăк ялсем тата ВОЩАГИНО, ЗАВАРУЙКА чугун ҫул станцийĕсем.

ПОЛОЦК хулинчен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем Витебск облаҫĕнчи район центрне ДРИССА хулине тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 20 пункта ытла йышăннă, ҫав шутра — СОЛОМИНО, ЗАДЕЖЬЕ, КОЗЛОВЩИНА, БОРОВКА ятлă пысăк ялсем тата ДРИССА чугун ҫул станцийĕ.

ДВИНСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем ҫапăҫса малалла куҫса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, ҫав шутра — САЛАКАС, СУДЕЙКЯЙ, СТОБУЛЬНКИ, ЛЕЛЮНЫ, СКОДУЦИШКИ, МАЛЯТЫ, ШУПЕНЕ, РОМАШКАНЬЦЕ ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем июлĕн 13-мĕшĕнче, 5 кун хушши ҫапăҫнă хыҫҫăн, тăшманăн ВИЛЬНЮС хулинче хупăрласа илнĕ гарнизонне пĕтерсе тăннă, ҫапла вара Литва Совет республикин столицине фашистла захватчиксенчен ирĕке кăларнă. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 8.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. ВИЛЬНЮС хулинче пирĕн ҫарсем нимĕҫсен 5.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, тĕрлĕ калибрлă 156 тупă, 68 танкпа хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупă, 1.500 автомашина тытса илнĕ.

ВИЛЬНЮС хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 250 пункта ытла тытса илнĕ, ҫав шутра — ВОЙДЗЯНЫ, КЕЙТОВИЧИ, МУСТОМЯНЫ, СУМЕЛИШКИ, ВЫСОКИЙ ДВОР, БАУГАЙ, ОРАНЫ, РУДНЯ, НОВА РУДА, МАРЦИНКАНЦЕ ятлă пысăк ялсем тата БАЙЦЕРИШКИ, ВЕВИС, КАВГАНЫ, ЖОСЛИ, ОЛЬКЕНИКИ, БОЦУЛЯНЦЫ, ОРАНЫ, МАРЦИНКАНЦЕ чугун ҫул станцийĕсем.

ЛИДА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем наступлени туса пынă, Барановичи облаҫĕнчи район центрне ЩУЧИН хулине тытса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, ҫав шутра — ОСТРЫНА, КАМЕНКА, РОЖАНКА, МИЖЕЛЕВЩИНА, СУХИНИЧИ, ЗАНЕМЕНСК, ЗЕЛЬВЯНЫ, МОСТЫ, ПЕСКИ, САМАРОВИЧИ ятлă пысăк ялсем тата СКШИБОВЦЫ, ЖОЛУДОК, РОЖАНКА, МОСТЫ чугун ҫул станцийĕсем.

СЛОНИМ хулинчен хĕвеланăҫнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем ҫапăҫса малалла куҫса пынă, Брест облаҫĕнчи район центрне РУЖАНЫ хулине тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла йышăннă, ҫав шутра — ЯНОВЩИЗНА, МЕНДЗЫЖЕЧ, БЕЗВОДНА, КУЛЯНЫ, БОЯРЫ, ЛЫСКУВ, СМОЛЯНИЦА, СПОРУВ ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 12-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕн пур фронтсенче нимĕҫсен 26 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Кондопога хулинчен хĕвеланăҫнерехре пĕр соединени чаҫĕсем, тăшман хирĕҫ тăнине сирсе ярса, вăйлă ҫирĕплетнĕ пункта Суоярви хулине тытса илнĕ. Финсем пысăк ҫухатусем тӳснĕ. Пирĕн пĕр часть кăна тăшманăн 700 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 3 артиллери батарейине тата ҫар материалĕсем тиенĕ пысăк обоза тытса илнĕ. Тепĕр фронтра пирĕн ҫарсем ҫавăрса илмелли маневр тунă та финн пехотин батальонне хупăрласа илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Идрица хулинчен ҫурҫĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă. Тăшман малтанах хатĕрлесе хунă оборона рубежĕпе, Псковпа Идрица хушшинчи чугун ҫул тăрăх пыраканскерпе, усă курса, вăйлă хирĕҫ тăрать. Пирĕн ҫарсем тăшмана Опочка хулинчен ҫурҫĕртерехре пырса ҫапнă та нимĕҫсен оборонине савăлласа кĕрсе кайса, Вощагино чугун ҫул станцине тытса илнĕ. Совет ҫарĕсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан тăшман ҫынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк ҫухатусем тӳсет. Кун каҫиччен тăшманăн 3.000 салтакĕпе офицерне ҫити вĕлерсе пĕтернĕ. 600 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Двинск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем ҫапăҫса малалла куҫса пынă. Совет пехотинецĕсем, артиллери пулăшса пынипе, тăшманăн тĕреклетнĕ икĕ пунктĕнчи гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫ пехотин батальонне тата 8 танк пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫсенчен 6 тупă, 5 миномет, 24 пулемет тата ытти трофейĕсем те тытса илнĕ. Двинскпа Каунас районĕнче хаяр ҫапăҫусем пулса иртнĕ. Совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем мотопехота полкне тата артиллерин икĕ дивизионне аркатса тăкнă. Утена хулинчен хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем, вăрманлă-шурлăхлă йывăр условисенче кĕрешсе, 15 километр малалла куҫнă, халăх пурăнакан темиҫе пункта тытса илнĕ.

* * *

Вильнюс хулинчен хĕвеланăҫнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 250 пункта ытла тытса илнĕ. Ораны районĕнче (Вильнюсран кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре) нимĕҫсем икĕ пехотнăй дивизийĕн чаҫĕсене илсе пынă та мелле позицисенче ҫирĕпленсе ларма хăтланнă. Пĕр соединени чаҫĕсем, вирлĕн пырса ҫапса, тăшмана хăваласа янă та халăх пурăнакан пĕр пункта тата Ораны чугун ҫул станцине тытса илнĕ. Пирĕн подразделенисем тăшманăн аркатса тăкнă чаҫĕсене хăваласа пыраҫҫĕ. Тепĕр районра совет кавалерисчĕсем чугун ҫул станцине кĕтмен ҫĕртен тапăннă та тăшманăн пехотăпа танксем тиенĕ икĕ эшелонне аркатса тăкнă.

Пирĕн авиаци ҫĕр ҫинчи ҫарсене активлă пулăшса пынă. Летчик-штурмовиксем нимĕҫсен ҫыхăнăвĕсемпе речĕсене пыра-пыра ҫапнă. Темиҫе танк, 100 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, нимĕҫсен ҫар эшелонне ҫĕмĕрнĕ.

* * *

Лида хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем, наступлени туса пырса, Барановичи облаҫĕнчи район центрне Щучин хулине тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти темиҫе пункта йышăннă. Ҫапăҫусенче тăшманăн 1.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 340 нимĕҫе тыткăна илнĕ. Трофейĕсем тытса илнĕ, вĕсем шутĕнче—12 тупă, 62 пулемет, понтон паркĕ тата ытти тĕрлĕ ҫар пурлăхĕ.

* * *

Слоним хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕнтерсе, шоссе ҫулĕсен паха узелне Ружаны хулине тытса илнĕ. Анăҫалла малалла ӳстерсе пырса, совет боецĕсем 20 километр хĕвеланăҫнелле куҫнă, Лыскув ятлă яла йышăннă. Ҫав районра 4 танк, хăй тĕллĕн ҫӳрекен 3 тупă тата 35 автомашина пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫсенчен «Тигр» йышши 2 танк, 6 хир тупи тата 2 боеприпас склачĕ тытса илнĕ.

* * *

Белоруссири партизансем Сталин ячĕпе тăракан отрячĕ Хĕрлĕ Ҫар пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан нимĕҫсен колоннине атакăланă. Совет патриочĕсем тăшманăн 120 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, трофейĕсем тытса илнĕ, тыткăна илнĕ тата нимĕҫсен 217-мĕш гренадерски полкĕн документĕсене тытса илнĕ. Партизансем пĕр эрне хушшинче фашистла нимĕҫ захватчикĕсене 200 ҫынна ытла тыткăна илнĕ.

Совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ ӳсни

СССР Наркомсовхозĕн совхозĕсем июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна какай, сĕт тата ҫăм памалли ҫур ҫулхи плана ирттерсе тултарнă. Ҫамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес ĕҫре нумай совхозсем чылай пысăк ҫитĕнӳсем тунă. Иртнĕ ултă уйăх хушшинче кашни 100 ĕне, сурăх, сысна пуҫне пĕлтĕрхи пĕрремĕш ҫур ҫулхинчен 10 пăру, 25 путек, 19 сысна ҫури ытларах ҫуралнă.

Кăҫалхи ултă уйăх хушшинче совхозсенче майракаллă выльăхсен хисепĕ 13 процент ытла, сыснасен хисепĕ 17 процент, сурăхсен хисепĕ 36 процент ӳснĕ. (ТАСС).

25.000 ҫамрăк учитель

РСФСР-ти педагогика шкулĕсенче государство экзаменĕсем вĕҫленсе пыраҫҫĕ. Учитель институчĕсем, педагогика институчĕсем, педагогика училищисем тата университетсем кăҫал 25.000 педагог ытла вĕрентсе кăлараҫҫĕ. Вĕсенчен 24.000 ҫынна туллимар вăтам тата вăтам шкулсене яраҫҫĕ, пĕр пин ҫынна СССР Наука академийĕн тата Халăх Комиссариачĕсен Наукăпа тĕпчев учреждениййĕсене яраҫҫĕ. Фашистла нимĕҫ оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуласемпе ялсенчи шкулсене 6.000 преподаватель каять. (ТАСС).

Вырăссен аслă писателĕ
Антон Павлович Чехов
(вилнĕренпе 40 ҫул ҫитнĕ май).

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

РЕСПУБЛИКăРИ КОЛХОЗСЕМ ҪЕРТМЕ ТУМАЛЛИ, ҪĔРУЛМИ КУПАЛАМАЛЛИ, СИЛОС ХЫВМАЛЛИ, УЛăХРИ ТАТА АКНă КУРăКСЕНЕ ҪУЛМАЛЛИ ПЛАНСЕНЕ ИЮЛĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КăТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Ҫĕртме тунă	Ҫĕрулми купаланă	Улăхри утта ҫулнă	Акнă курăксене ҫулнă	Силос хывнă
Улатăр	33,2	61,9	55,1	8,4	42,9
Элĕк	104,6	5,0	34,2	13,9	30,7
Вăрнар	104,9	96,7	54,0	17,4	46,5
Йĕпреҫ	76,2	27,7	100,0	68,3	56,2
Ишлей	98,6	47,3	70,0	13,9	37,0
Калинино	100,4	87,8	78,4	65,6	71,2
Канаш	123,6	67,7	101,2	42,9	10,1
Куславкка	102,5	15,1	59,5	5,4	43,0
Комсомольски	76,7	60,2	100,0	32,9	72,3
Красноар-ски	121,2	100,0	71,0	6,9	76,6
Хĕрлĕ Чутай	86,3	2,2	87,7	6,0	8,5
Кувакино	11,3	72,6	63,7	19,7	69,4
Сĕнтĕрвăрри	97,5	57,3	62,3	21,7	102,7
Мураш	103,4	26,5	100,0	34,5	69,5
Октябрьски	99,6	7,2	56,2	15,5	51,4
Первомайски	75,1	100,0	73,5	23,1	28,9
Пăрачкав	42,9	26,9	77,0	—	51,1
Советски	101,8	11,1	91,2	—	48,0
Сĕнтĕр	108,7	83,4	59,7	43,1	62,1
Вăрмар	94,7	3,1	100,0	56,0	46,5
Ҫĕрпӳ	113,2	74,3	80,2	34,0	53,0
Шупашкар	112,4	83,5	82,7	33,5	59,6
Чкаловски	39,3	49,6	100,0	44,8	58,4
Чурачăк	96,6	34,1	47,5	37,2	109,6
Шăмăршă	40,0	100,0	93,7	35,1	23,5
Шăхасан	100,5	59,0	75,5	43,8	45,6
Ҫĕмĕрле	67,3	100,0	77,7	42,2	78,8
Етĕрне	96,8	65,2	75,0	26,4	60,6
Елчĕк	100,7	88,8	101,0	42,5	65,2
Тăвай	83,0	57,5	81,4	50,5	45,1
Шупашкар хули	109,4	100,0	41,1	—	—

РЕСПУБЛИКăРИ МТС-СЕНЧЕ КОМБАЙНСЕМПЕ МОЛОТИЛКăСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ҪУЛХИ ИЮЛĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КăТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

МТС-сем	Комбайн-сене юсанă	Молотил-кăсене юсанă
Улатăр	27,2	8,3
Элĕк	85,7	72,7
Вăрнар	64,2	69,5
Йĕпреҫ	109,0	84,6
Ишлей	66,0	56,2
Канаш	46,6	110,0
Куславкка	46,1	46,0
Комсомольски	86,6	66,6
Красноармейски	100,0	50,0
Хĕрлĕ Чутай	85,7	40,0
Кувакино	19,4	47,3
Сĕнтĕрвăрри	14,2	30,7
Первомайски	33,3	54,5
Пăрачкав	33,3	29,4
Сĕнтĕр	54,5	43,4
Вăрмар	76,1	38,4
Ҫĕрпӳ	38,4	43,7
Шупашкар	28,5	53,3
Чкаловски	75,0	85,7
Шăмăршă	81,8	60,0
Шăхасан	100,0	—
Ҫĕмĕрле	50,0	27,2
Етĕрне	25,0	9,0
Елчĕк	56,0	78,9
Тăвай	29,4	40,0
Пĕтĕмпе	54,5	50,1

Тырпул тухăҫлăхне ӳстерессишĕн кĕрешеҫҫĕ

КӲКЕҪ. Комсомолăн Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри пуҫламĕш организацийĕ —чи пысăк организацисенчен пĕри. Унта 22 член. Комсомол организацин секретарĕ Васильев юлташ пĕтĕм ĕҫе хальхи тапхăр ыйтнă пек туса пырать. Комсомолецсем халь ялхуҫалăх ĕҫĕнче пархатарлă ĕҫлеҫҫĕ. Акă, В. Евстафьев юлташ ҫĕртме сухи тунă ҫĕрте кунсерен иккшер гектар сухалать, норма — 1,35 гектар. Пилĕк комсомолец утă ҫулнă ҫĕрте ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем кашниех нормăпа ирттерсе тултараҫҫĕ. Сăмахран, А. Григорьев, Н. Васильев ыт. те ĕҫ нормине 130 процент таран тултараҫҫĕ. Колхоз 20 гектар ҫинчи утта ăнăҫлăн ҫулса пуҫтарчĕ.

Комсомол организацийĕ пуҫарнипе колхозра вăйлă тырпул звенисем тунă. Звено членĕсем халь колхоза силос хывас ĕҫре активлăн пулăшрĕҫ. Вĕсем хăйсем кăна 50 тонна силос хыврĕҫ, уя 3.998 лав тислĕк кăларчĕҫ.

Комсомолецсем производствăра лайăх ĕҫленипе пĕрлех колхозниксем хушшинче ăнлантарулă ĕҫе те тивĕҫлипе туса пыраҫҫĕ. Стена хаҫачĕсем тата боевой листоксем кăлараҫҫĕ. Партипе правительствăн постановленийĕсемпе Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене колхозниксем патне вăхăтра ҫитереҫҫĕ.

Иртнĕ ҫулта тырпулсене кĕске вăхăтра пухса кĕртнĕшĕн колхоз Чăваш АССР Верховный Совечĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕҫлĕ пулчĕ. Ҫак награда кăҫал тата ытларах ĕҫлеме хавхалантарать. Колхоз тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе ҫитрĕ ĕнтĕ. Икĕ жнейка тата пĕр молотилка юсанă. 50 штук кĕреплеллĕ ҫава хатĕрленĕ. Уборка вăхăтĕнче кирлĕ пулакан ытти хатĕрсем те ҫителĕклĕх.

М. НИКИТИН.

Тыра вырма тухма хатĕр

СОВЕТСКОЕ. Купăрляри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем уйри тырпулсене пухса кĕртме хĕрсех хатĕрленеҫҫĕ. Ҫавна май кунта икĕ жнейка, икĕ молотилка юсанă. Ҫурласем ҫителĕклĕ тата вĕсене шăлланă, 10 урапа юсаса хатĕрленĕ. Тыра вырнă вăхăтра кунта столовăй, ачасен ясли пулать. Кирлĕ ҫимĕҫсене ҫителĕклĕ хатĕрленĕ. Ялхуҫалăх инвентарĕсемпе михĕ-шăпалăксем ытлашшипех пур. Кусемсĕр пуҫне амбарсене—ҫӳп-ҫапсенчен тасатнă, итемсене ҫĕрĕк улăмсенчен тасатнă.

Колхоз ҫĕртме туса пĕтерчĕ, ҫĕртме пуссине сухаличчен 2000 лав ытла тислĕк кăларнă. Ҫавăн пекех утта ҫулса пĕтерчĕ. Ăна лайăх типĕтсе капана хывнă.

М. СТЕПАНОВА.

ВЫРĂССЕН АСЛĂ ПИСАТЕЛĔ А. П. ЧЕХОВ

Антон Павлович Чехов пирĕн пĕтĕм халăх юратнă писательсенчен пĕри пулса тăрать. Унăн творчествине Ленин пысăка хурса хакланă. Сталин юлташ унăн ятне пирĕн халăх ĕмĕр асăрха тытмалли ятсем йышне хурать. Горький, унăн пайташĕ, çапла çырнă: «Чехов — Российăн чи лайăх тусĕсенчен пĕри, çĕ çине тĕрĕс пăхакан аслă тус, çĕршыва чунтан юратакан тус, çĕршыв ăс-пĕтĕм савăнăçне хуйхине хăйĕн чĕри витĕр ирттерекен тус». Лев Николаевич Толстой Чехова: «Вăл аслă — вырăс çынни. Çапла, питех те, питех те вырăс çынни», тенĕ.

Чехов пирĕншĕн вăл пĕтĕм чун-чĕрипе вырăссен наципллĕ художникĕ пулнипе, хăйĕн произведенийĕсенче вырăс халăхĕн чи лайăх енĕсене, унăн ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене, халăх тăван çĕршыва юратнине тата вăл çĕршывăн малашлăхĕ çинчен ĕмĕтленнине тĕрĕс кăтартса панипе çывăх та хаклă.

Антон Павловичăн пултарулăхĕ иртнĕ ĕмĕрĕн сакăрвуннамĕшпе тăхăрвуннамĕш çулĕсенче тата XX-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çулĕсенче çитĕнсе пырса анлăн сарăлнă. Писателĕн талантĕ çитĕнсе пынă сакăрвуннамĕш çулсем народниксен юхăмĕ пăсăлса пынипе тата реакци вăй пулса тăнипе паларса тăраççĕ. Анчах та общество пурнăçра çав тери пысăк вырăн йышăнса тăракан процессем пулса пынă. Рабочи класс ӳссе хăйĕн вăйне пухнă. Тăхăрвуннамĕш çулсенче Ленин ĕçлеме тытăннă.

Чехов хăйĕн калавĕсене 1880 çулта юмористла журналсенче «Антоша Чехонте» псевдонимпа пичетлеме пуçланă. Çамрăк чухне çырнă çав произведенисенчех писатель ирĕклĕхе, чăнлăха хӳтĕленĕ, этеме этем хисеплени тата юратни кирлине кăтартса панă. Чехов пултарулăхĕ ӳссе çирĕпленсе пынă май унăн произведенийĕсенче пирĕн çĕршывăн мĕнпур пултарулăх вăйĕсем хăватлăн чечекленесрине шанса тăни вăйлăнрах та тарăнрах паларса пынă.

Прогрессиллĕ шухăш тытса пыракан писатель, вырăс демократĕ-«разночинецĕ», врач пулма вĕренсе тухнăскер, Антон Павлович художествăллă пултарулăх çине пурнăçа тĕрĕс те тарăннăн тĕпчесе пĕлес ĕç çине пăхнă пек пăхнă. Вăл хăйĕн уйрăм стильне шыраса тупнă, унăн калавĕсем тултан пăхсан лăпкă та «хумхануçăр» пек курăннă. Вăл хăйĕн произведенийĕсене вĕсенче автор хăй вулаканшăн палăрмасăр юлмалла туса çырма тăрăшнă. Унăн произведенийĕсенче вырăс пурнăçĕ хăй çинчен хăех каласа панă пек туйăннă.

Антон Павлович хăйĕн халăхĕ аслине тата вăл чунхавал тĕлĕшĕнчен хăватлине чĕререн ăнланнă, вăл халăхăн вĕçĕ-хĕррисĕр аслă пултарулăхне, «чаплă та хăватлă тăван çĕршывăн» илемĕпе вăйне тивĕçлĕ пек пурнăç тума ĕмĕтленнĕ («Çеçенхир» ятлă повесть).

Вăл хăйĕн тăван çĕршывне, вырăссен чăн-чăн наципллĕ пурнăçне пĕтĕм чун-чĕререн юратнă. Вăл хăй çинчен хăйĕн «Çул çинче» ятлă калавĕнчи геройăн сăмахĕсемпе çапла калама пултарнă: «Эпĕ вырăс халăхне чĕре ыратакан пулăччĕнех юратнă», «унăн чĕлхине, унăн пултарулăхне юратнă».

Германирен янă çырура Антон Павлович çапла çырнă: «Нимĕçсен пурнăçĕнче нимĕнрен те пĕр тумлам талант та пурри туйăнмасть, пурнăç тути-масин пĕр тумламĕ те палăрмасть», тенĕ. «Пирĕн вырăссен пурнăçĕ нумай талантлăрах», — тесе палăртнă вăл. Чехов произведенийĕсен геройĕсем те çав шухăшсемпе туйăмсем çинчен калаççĕ: «...мĕн тери пуян та нумай енлĕ пирĕн вырăс пурнăçĕ,— тет çамрăк ученăй, химик, гимнази учителĕ Ярцев «Виçĕ çул» ятлă повеçре.—

Ах, мĕн тери пуян! Пĕлетĕр-и, эпĕ кунран кун çавăн ытларах та ытларах ăнланма тытăнатăп: эпир çав тери аслă уçă çитес умĕнхи тапхăрта пурăнатпăр [illegible]».

Телей çывăххине туйса, тăван çĕршыв хăйĕн аслă ума çитес умĕнхи тапхăрта пурăннине туйса, [illegible] Чехов мĕнпур пултарулăхĕнче паларса тăрать.

Тургенев та, Левитан пекех, Чехов вырăс пейзажĕн чи лайăх мастерĕ пулнă. [illegible] Чеховăн пейзаже çав тери чĕрĕ пейзаж, ун çинче поэзиллĕ шухăш варкăшса тăрать. «Мĕн тери илемлĕ йывăççем, чăнпипех те ĕнтĕ вĕсем патĕнче мĕн тери илемлĕ пурнăç пулма тивĕçлĕ»,—«Виçĕ пĕр тăван хĕр» ятлă пьесăри геройсенчен пĕри каланă çав сăмахсенче Чехов ӳкерсе панă вырăс çутçанталăкĕн мĕнпур картинисен тĕп шухăшĕ паларса тăрать.

Унăн «Çеçенхир» ятлă повеçĕ тăван çĕршыв çинчен çырнă поэма пулса тăрать. Вĕçĕ-хĕррисĕр анлă та хăватлă çеçенхирĕн сăнлăхĕнче телейшĕн тунсăхлакан аслă çĕршывăн сăн-сăпатне кăтартса панă. Повеçри герой Егорушка ятлă ача сăнĕнче писатель хăйĕн ача чухнехи пурнăçне курать. Вăл хăйĕн куçĕ умĕнче уçăлакан çав тери аслă çеçенхир талккишĕн илемне курса савăнать, ун куçĕ умне юмахри Илья Муромец пек улăпсен пĕвĕсем тухса тăраççĕ. «Çав улăпсем чĕрĕ пулнă пулсан, вĕсен аслă пĕвĕсем çак çеçенхирпе çул çинче мĕн тери килĕшӳллĕ пулнă пулĕччĕç!».

Российăшăн улăпла утăм, çутă та илемлĕ пурнăç килĕшӳллĕ. Çак шухăш Чеховăн пĕтĕм пултарулăхĕнче тĕп вырăн йышăнса тăнă.

Чеховăн сатири пурнăçри ирсĕрлĕхсене тăрă шыв çине кăларнипе кăна мар, пурнăçа çутă енчен çутатса пырса хакламалла вĕрентнипе те паларса тăрать. Чехов сатирин уйрăмах паллă образĕсем унтер Пришибеевпа Беликов учитель — пурнăçа хăйне те «чарса лартма» питех те айванла хăтланаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те пурнăçран хăраççĕ: «Мĕн те пулин сиксе ан тухтăрччĕ», теççĕ вĕсем. Пришибеевсемпе Беликовсенчен кулса, Чехов сатири пурнăç вăйне, чаплă малашлăх пуласса шанса тăнине çирĕплетет.

Чехов произведенийĕсенчи геройсем пурнăçри ытларах илемлĕхпе чăнлăха туйнипе паларса тăраççĕ. «Чăнлăхпа илемлĕх тĕнчене тытса тăраççĕ»,—тет «Студент» ятлă калаври пĕр герой. Пурнăç чăнлăхĕ вара — ĕçсыннисем хушшинче кăна. Тăван çĕр çинче ирĕклĕ те творчествăллă ĕç вăй илсе чапа тухсан, тин ырă пурнăç çитет.

«Этемĕн пурте илемлĕ пулмалла: сăнпичĕ те, тумтирĕ те, чунĕ те, шухăшĕсем те»,—тесе калать Чехов «Дядя Ваня» пьесăри Астров сăмахĕсемпе. Çав сăмахсене Чеховăн мĕнпур пултарулăхне пĕтĕçтерекен эпиграф вырăнне хума пулать. Вĕсене пирĕн совет халăхĕн чаплă хĕрĕ Зоя Космодемьянская хăйĕн кĕнекине çырса хунă. Çапла Антон Павлович халăх геройнин чунне çитĕнтерес ĕçе те хутшăннă. Çав геройсăн сăнарĕ, пирĕн халăх чунĕн илемĕпе хăватне пĕтĕçтерекен вырăс хĕрĕн сăнарĕ пулса, ĕмĕрлĕхе юлĕ.

Хăйĕн пĕтĕм чун-чĕрипе халăх пурнăçĕсене çыхăннă художник, çав пурнăç хăш еннелле аталанса каяссине витĕрех курса илме пĕлекен художник — Чехов пирĕн çĕршывăн малашлăхĕ çинчен пророкла сăмахсем каланă. Аслă «буревестник» — Горькийпе пĕрле вăл хăватлă тăвăл — революци килессине чĕрипе туйса тăнă. Чехов Горький пултарулăхне пысăк влияни панă. Антон Павлович вырăс халăхĕ хăйĕн хушшинчен тăван çĕршыв телейĕшĕн кĕрешекенсене ӳстернине туйнă, вăл Горькийн «Мещенсем» ятлă пьесинчи çĕнĕ героя—революциллĕ рабочи класăн сăнарне пĕтĕçтерсе тăракан Нила хавасланса саламланă. Интеллигенципе халăха пĕрле пĕтĕçтерме тăрăшса, Чехов хăйĕн геройĕсене те, çав тӳрĕ кăмăллă, лайăх çынсене, Горький геройĕсем пекех активлă социальнăй кĕрешӳве хутшăнтарма ĕмĕтленнĕ.

Чеховăн сăнарĕ çав тери пĕрлĕхлĕ пулнипе паларса тăрать. Сăпайлă та ыйхăлла çын — вăл кулленхи вак-тĕвек сенче пытанса тăракан «палăрман» илемлĕхе курма пĕлнĕ. Российăн тăшманĕсене час-часах шиклентерсе ӳкернĕ çав пытанса тăракан вăйăн илемне писатель пĕтĕм тарăнăшĕпе çутатса пама пĕлнĕ.

Антон Павловичăн хăй вырăс умĕн нумайăх мар малтан çырнă произведенийĕсем — «Чие сачĕ» пьеса, «Çурăçнă хĕр» калав — писатель тăван çĕршывăн çĕнĕ пурнăçĕ çывăххине шанса тăнине уйрăмах вăйлăн кăтартса параççĕ.

Революци тăвăлĕ килсе çитрĕ. Тăван çĕршывăн чăн-чăн хуçи — нумай нацилĕ совет халăхĕ, большевикла парти, Ленин—Сталин парти пĕтĕçтерсе ертсе пынипе, хăйĕн тăван çĕршывне халиччен нихçан пулман пек çитĕнтерсе чечеклентерчĕ, пултарулăх вăйĕсем хăватлăн ӳсе çитĕнчĕç. Пĕтĕм çĕршыв чечекленекен сад пулса тăчĕ, ун пурнăçĕн законĕсем чăнлăхпа илемлĕх законĕсем пулса тăчĕç.

«Мĕн тери ырă туйăм вăл—этеме хисеплеме пĕлни!» — тесе çырнă Антон Павлович хăйĕн çыру кĕнекинче. Эпир çав ырă туйăма пĕлтĕмĕр. Этеме этем юратнипе хавхаланса эпир чаплă пурнăç турăмăр. Чехов пире ĕçпе кĕрешӳре пулăшрĕ. «Хупăлчари этемсем» — çав ирсĕрсем — халăх тăшманĕсем пире малалла каймашкăн чăрмантарма, пурнăça тытса чарма хăтланнă чухне, Ленинпа Сталин тăван çĕршывăн телейĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте Чехов образĕсемпе вĕсене хĕçпăшал вырăнне курса усă курчĕç.

«Пирĕн çĕршывра пришибеевсене юратмаççĕ»,—тенĕ Сталин юлташ. Пирĕн çĕршывра этем тивĕçлĕхне, вăл ырă пурнăç тума ĕмĕтленнине пусăрма хăтланнине курăймаççĕ, капăрлăпине, иртĕхсе мухтаннине, мăнкăмăлланса лăпланса ларнине юратмаççĕ. Пирĕн çĕршывра çутăпа чăнлăха, шухăша, илемлĕхпе сăпайлăха юратаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир Чеховпа унăн произведенийĕсене шурне те пĕтĕм чун-чĕререн саватпăр.

Гитлерла Германи совет çĕршывĕнчи халăхсен мирлĕ пурнăçне пăсрĕ, тăшман, эпир Октябрьти аслă революцире çĕнтерсе илнисене пĕтерсе тăкас тесе, хăйĕн пĕтĕм хаярлăхĕпе тата тискерлĕхĕпе пирĕн çĕршыва килсе тапăнчĕ. Тăшман урса кайсах хĕснине Совет государстви тӳссе ирттерчĕ, тăшманăн тĕп вăйĕсене çапа-çапа аркатрĕ, халĕ ĕнтĕ ирсĕр захватчиксене хăйсен тĕксĕм йăвине, çăва шăтăкнелле хăвалать.

Ленинпа Сталин ертсе пынипе хăйĕн чăнлăхне чаплă кăларнă улăпла халăха çĕнтерме çук. Антон Павлович Чехов пек çутă сăнлă та талантлă ывăлсем çуратакан халăха çĕнтерме çук.

Тăшман кӳнĕ йывăр сурансене совет халăхĕ сиплесе тӳрлетет. Тĕлĕнмелле çĕнĕ садсем ӳссе чечекленĕç. Пирĕн тăсăсăр çĕр çинче халиччен нихçан пулман чаплă пурнăç пулĕ.

В. ЕРМИЛОВ.

А. П. Чехов чăваш литературинче

Ют çĕршывсенчи писательсем А. П. Чехов творчествинче вăл чăнлăх шыранине, халăх пурнăçне пур енчен те тĕрĕс те анлăн çутатса панине палăртаççĕ.

«Чехов юлашки çирĕм çул хушшинче нумай çĕршыври çамрăк писательсемшĕн хăй еннелле туртакан чи хăватлă магнитсенчен пĕри пулнă», — тесе çырнă 1933 çулта Англи писателĕ Джон Гелсуорси.

Чăваш писателĕсемшĕн, пирĕн вулакансемшĕн, вĕренекен çамрăксемшĕн Чехов питĕ те çывăх ят. Унăн чăвашла куçарса кăларнă кĕнекисене кашни ялта, кашни шкулта, рабочисен клубĕсенче курма пулать, унăн пьесисене театрсенче кăтартаççĕ, драмкружоксем выляса параççĕ. Чехов произведенийĕсене чăвашла куçарса кăларни пирĕн вулакансемшĕн, яланах тенĕ пек, пысăк событи пулса тăрать. Сăмахран, 1938 çулта «Капкăн» журналта «Хупăльчари этем» тухнине пĕлсен, Красноармейски районри Мăн-Шетмĕпе Яманак шкулĕсенчен çав калава илме редакцине ятарласа çын янăччĕ; хăш-пĕр ялсенче ăна колхозниксене пухусенче вуласа пани çинчен хыпарсем килнĕччĕ. Çавăнпа тепĕр чухне ялти ватăсем Чехова чăваш тесе ăнланнинчен те, хăшпĕр кĕтессенче юлнă кахалсене, кив шухăшлă çынсене Чехов калавĕсенчи геройсен ячĕсемпе чĕнни нчен те нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

А. П. Чехова чăвашсем тăван чĕлхепе вулама тытăннăранпа пурĕ те 25 çул кăна иртнĕ! Чăн та улăпла утăмсемпе ӳсет иккен пирĕн культура, юмахри хăвăртлăхпа аталанать халăхăн культурăллă шайĕ. Ку вăл йăлтах Октябрьти Социализмлă Аслă революци тивлечĕ, пирĕн юратнă çулпуçсен — Ленинпа Сталинăн пархатарлă ĕçĕсен тивлечĕ.

Чеховăн чи малтанхи произведенине — «Усал шухăшлă çын» текен калавĕ тăрăх тунă инсценировкăна — 1919 çулта Чăваш театрĕнчи артистсем куçарса, Колчака хирĕç çапăçакан чăваш красноармеецĕсене кăтартса панă. Çакна та палăртсах хăвармалла: инсценировкăри герой — Денис Григорьев хушаматлă тĕттĕм хĕресчене артистсем чăваш тумĕпе, чăваш çынни туса вылянă.

Çак пĕчĕкçĕ кăна калав хăй вăхăтĕнче чăваш халăхне Чехов творчествипе паллаштарас ĕçре питĕ те пысăк вырăн йышăннă.

1919 çултах П. Н. Осипов Чеховăн тепĕр произведенине «Табак сиенĕ çинчен» текен пĕр пайлă сцена—монологне куçарнă, ăна та Чăваш театрĕнче выляса панă.

1920 çулсенчен пуçласа, «Шурăмпуç» журналта «Хирургия» тата «Мăн çул çинче» ятлă произведенисем пичетленсе тухнăранпа, Чехов пьесисем районсемпе ялсенчи театрсен, драмкружоксен репертуарне çирĕппĕн кĕреççĕ.

1920—1930 çулсем хушшинче тĕрлĕ журналсемпе хаçатсенче, Издательствăра Чеховăн «Тип çырмара» ятлă повеçĕ тата ача-пăча калавĕсен кĕнекисем пичетленсе тухаççĕ, 1930 çулсем хыççăн «Упа», «Хăтара», «Туй» текен водевильсемпе комедисем тата «Хамелеон», «Тухатмăш», «Вилнĕ виле» тата ытти калавсемпе инсценировкăсем пичетленеççĕ.

Чехов произведенийĕсене куçарас ĕçе писательсем В. Алагер («Чие сачĕ», «Армантă», «Пăтара», «Кулак йăвн»), Иван Мучи (калав кĕнекисем), С. В. Эльгер (водевильсем), Леонид Агаков («Йăван пичче», «Хуйхă», «Егерь», «Çывăрас килет»), Н. Пиктемир («Мужиксем», Каштанка») тата ытти хутшăнаççĕ.

Чăваш писателĕсем Чехова редакцисемпе издательствăсем хушнипе мар, хăйсемех ăс тытса куçарса пыраççĕ. Вĕсем, Чехова питĕ юратса куçарнă май, унăн чĕлхипе ытларах паллашма ĕмĕтленнĕ.

Чеховăн произведенисене чăваш халăхĕ хушшине сарас, çамрăк писательсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре «Капкăн» журнал нумай ĕçлет. Чеховăн чăвашла куçарнă произведенийĕсенчен çурри ытла унăн страницисем çинче пичетленсе тухнă. «Капкăн» ялкорсемпе писательсен çĕнĕрен ӳссе çитĕнекен кадрĕсене Чехов калавĕн тĕслĕхĕсемпе паллаштарать, кĕске те шухăш тĕлĕшĕнчен анлă, çивĕч сăмахсемпе çырма вĕрентет, кулленхи пурнăçра, çитменлĕхсемпе кĕрешес ĕçре Чехов сăнлăхĕсемпе мĕнле усă курмаллине кăтартса парать.

Чехова чăвашла куçарса кăларас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем 1920—24 çулсенче тухнă калавсемпе водевильсене юлашки çулсенче çĕнĕрен куçарса кăларнă тĕслĕхрен питĕ лайăх палăраççĕ.

Чăваш писателĕсенчен чылайĕшĕ, уйрăмах кĕске формăллă произведенисем çыракансем, юмористсем А. П. Чеховран вĕреннĕ.

Пиртен нумайĕшĕ çамрăк писательсем редакцине пырсан, Хумма Çеменĕ вĕсене Чехов пек кĕскен те усăмлăн çырма, кулленхи сăнлăхсенчен типлă сăнлăхсене суйласа илме, обывательсен ултавлăхне, «мăкалăхне» курма вĕрентсе калани сене лайăх астăваççĕ.

Ытти писательсенчен Леонид Агаковпа М. Н. Данилов—Чалдунăн кулăшла калавĕсенче те, Ф. П. Павловпа Айзманăн хăшпĕр комедийĕсенче те вĕсен авторĕсем Чеховран вĕреннине курма пулать.

40 çул каялла вилнĕ писателĕн хĕçпăшалĕ халĕ те-ха çивчĕ те çап-çутах. Чăваш писателĕсем вырăс культурин традицийĕсене çӳлте тытса тăнă аслă писательрен пысăк идейăллă искусство тума, çынсен пурнăçне телейлĕ тăвас çул çинче чăрмантарса тăракансене сирсе ывăтма вĕренеççĕ.

— Манăн пурăнас килет!—тенĕ А. П. Чехов «6-мĕш №-лĕ палатăри» герой сăмахĕсемпе. — Çĕнĕ пурнăç шурăмпуçĕ çуталĕ, чăнлăх çиеле тухĕ, пирĕн урамра та уяв çитĕ!.. Анчах та ăна эпĕ кĕтсе илеймĕп, вилсе выртăп, çапах вăл çутă пурнăça камăн та пулин ачин ачисем кĕтсе илĕç. Вĕсене эп пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп, савăнатăп, вĕсемшĕн савăнатăп... Ун пек пурнăç хăçан та пулин çитетех!

Хăйĕн пурнăçне «безвременье» текен вăхăтра, тĕрмери пек хĕсĕк çулсенче пурăнса ирттернĕ писателе вăл вилнĕренпе 40 çул тултарнă кун пĕтĕм ирĕклĕ чăваш халăхĕ ăшшăн асăнать.

Иван МУЧИ.
Хветĕр УЯР.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 13-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксем Котантен çурутравĕн никĕсĕнче нимĕççене çаплах хĕстерсе пыраççĕ, халĕ Ла-Э-дю-Пюи хулинчен 3 миля кăнтăртарахра тăраççĕ. Пирĕн çарсем Мон-Кастер вăрманĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Ла-Сальмоннери пунктне туртса илнĕ. Сентени пунктĕнчен кăнтăртарахра союзниксем Ла-Можери тата Ла-Розери пункчĕсене хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Сент-Андре-де-Боон ялĕ çине темиçе енчен тапăнса пыракан союзниксен çарĕсем Тот шывĕ урлă каçнă хыççăн пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ. Ку яла çуррине ытла союзниксем туртса илнĕ. Сен-Ло хулинчен çурçĕртерехре наступлени туса пыракан чаçсем Ла-Меофф пунктĕнчен иртсе кайнă, Сен-Ло хулипе Бериньи хули хушшинчи çула татнă, Сен-Пьер-де-Семильи пунктне йышăннă.

Кан хулипе Эвреси хули хушшинчи çул çинчи позицисене хирĕç нимĕçсем темиçе хут та контратака тунă, вĕсен атакисене пурне те сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕн самолечĕсем тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 13-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем вăрахăн, анчах та пĕр чарăнмасăр Лессэ хулинчен çурçĕрелле малалла куçса пыраççĕ. Карантан хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем 1.500 ярд малалла куçнă, тăшмана Сент-Андре-де-Боон ялĕнчен хĕссе кăларнă. Унтан пирĕн çарсем Байе хулипе Сен-Ло хули хушшинчи чугун çул çинче Ла-Барр-де-Семильи пункчĕ çывăхĕнче малалла куçнă.

Союзниксен авиацийĕ июлĕн 13-мĕшĕнче ирхине Ла-Маншăн хĕвелтухăç пайĕнче тăшман суднисен икĕ соединенине атакăланă тата Шартр районĕнче чугун çул объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă».

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН АРТИЛЛЕРИЙĔ АНКОНА ХУЛИНЕ ПЕРЕТ

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: тăшман союзниксен çарĕсене хытă хирĕç тăрать. Союзниксен çарĕсем тăшмана çӳллĕ вырăнсенчи позицисенчен хĕсе-хĕсе кăлараççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Лайятико хулине туртса илнĕ те унтан хĕвелтухăçнелле тата хĕвеланăçнелле малалла куçнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем тусем çинче Тибр шывĕ улăхĕн икĕ енĕпе те малалла куçнă. Фронтăн Адриатика участокĕнче улшăнусем пулман.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Кăнтăр Францири, Çурçĕр Италири тата Югославири объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи Анкона портне пеме пуçланă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ МЮНХЕНПА САARБРЮККЕН ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официально йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, паян американецсен йывăр бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Мюнхен районне тапăннă.

Американецсен авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсен тепĕр соединенийĕ ирхине Саарбрюккен хулине тапăннă.

НИМĔÇСЕН САМОЛЕТ-СНАРЯЧĔСЕМ ИЮЛĔН 12-МĔШĔ ЫРАН ТЕНĔ ЧУХ ÇĔРЛЕ КĂНТĂР АНГЛИ ÇИНЧЕ ПУЛМАН

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, каçхине тата июлĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çак юлашки 20 кун хушшинче нимĕçсен самолет-снарячĕсем малтанхи хут Кăнтăр Англи çийĕнче пулман. Лондон районĕнче ку çĕр сывлăшри тревога пулман виççĕмĕш çĕр пулнă.

БОЛГАРИ ТЕРРИТОРИЙĔНЧЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕНЕ ТАТА ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ ТИСКЕРРЕН МĂШКĂЛЛАНИ

СТАМБУЛ, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Софирен илнĕ хыпарсем тăрăх, июнь уйăхĕн вĕçĕнче гитлеровецсем совет гражданĕсене тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене Болгари çĕрĕ урлă чуралăха куçарса кайма пуçланă. Çав çынсене Украинăна оккупациленĕ вăхăтра ирĕксĕр хăваласа кайнă пулнă. Нимĕçсем вĕсене Совет Союзĕпе Германи фрончĕн кăнтăр участокĕсенче тата Румынире укрепленисем тунă çĕрте ĕçлеттернĕ. Халĕ вĕсене Болгари чугун çулĕсем тăрăх Германин вăтаçĕрти пайне куçарса каяççĕ.

Çапла калаççĕ: совет гражданĕсемпе тыткăна лекнĕ çар çыннисене тиенĕ эшелонсем пăхма та хăрушă. Вагонсене вараланчăк та çĕтĕк-çатăк тумланнă, асапланса пĕтнĕ, выçă çынсене лăк туллиех персе чикнĕ. Вĕсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай. Çав çынсене питĕ хытă хураллаcа пыраççĕ пулин те, совет гражданĕсемпе тыткăна лекнĕ çар çыннисем чылайĕшĕ Болгари территорине тарма пултарнă. Анчах та вĕсенчен нумайĕшне Болгари влаçĕсем нимĕçсен аллине тытса панă. Германи чуралăхĕнчен тарма хăтланнă чылай çынна халь Болгарин тĕрлĕ пункчĕсенче арестлесе хупнă. Вĕсене нимĕçсене тытса парасшăн, вĕсене вара нимĕçсем персе вĕлереççĕ.

КĔСКЕН

● Итали партизанĕсем çине тарăхса, нимĕç çарĕсем Тосканьре 18 ял çунтарса янă. Çав ялсенче кашнинчех вутра 50 çынтан пуçласа 80 çын таран пĕтнĕ.

● Лăпкă океан шывĕсенче маневрсем тунă чухне американецсен «С-28» подводнăй лодки шыва путнă. Çав лодка çинче 60 çынна яхăн пулнă. (ТАСС).

Гитлеровецсем Хĕвеланăç Украинăпа Польшăран васкасах чĕртаварпа оборудовани куçарса каяççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Дипломати учрежденийĕсенче пĕлнĕ тăрăх, Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: юлашки эрне хушшинче Львов хулипе Люблин хули районĕсенчен Вăтам Венгрие 80 товарнăй вагон ытла çитнĕ. Çав вагонсенче чĕртавар тата заводсемпе фабрикăсен оборудованийĕ пулнă. Краков хули районĕнчен Словакие 20.000 нимĕçе ытла çитнĕ. Эвакуацие питĕ васкаса тăваççĕ.

ДЕ ГОЛЛЬ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ĕнер пресс-конференцире де Голль генерал çапла каланă: «Вашингтонран тухса кайиччен эпĕ хам мĕн туйнишухăшлани çинчен кĕскен каласа парасшăн. Хам Пĕрлешӳллĕ Штатсен столицинче пулни мана питĕ кăмăла кайрĕ. Эпĕ Рузвельт президентпа питĕ уççăн та вăрăххăн калаçрăм. Эпĕ нумай министрсемпе тĕл пулса калаçрăм, уйрăм илсе кăтартсан —Кордэлл Хэллпа, конгресăн питĕ паллă членĕсемпе, Маршаллпа Арнольд генералсемпе, Кинг адмиралпа тата ытти питĕ паллă нумай деятельсемпе калаçрăм. Рузвельт президентпа эпĕ хам çакăнта тĕл пулса калаçма шухăшланин тĕллевне эпир пурнăçларăмăр пуль тесе шутлатăп эпĕ; çав тĕллев вăл—çак аслă вăрçăра тата ун хыççăнхи вăхăтра Францире Пĕрлешӳллĕ Штатсене интереслентерекен питĕ кирлĕ ыйтусем çинчен уçă чĕрепе тата чăркăшмасăр калаçасси пулнă. Эпĕ çакна шанса тăратăп: союзниксен çарĕсем малалла куçса пынăçемĕн тата ун хыççăн та, тĕнчене урăхла йĕркеленĕ май, США-па Франци правительствисем хăйсем умне лартакан мĕнпур пĕтĕмĕшле ыйтусене сӳтсе-явса майлаштарма хальхинчен çăмăлтарах пулĕ, мĕншĕн тесен эпир халь пĕр-пĕрне тата та лайăхрах ăнланма пуçларăмăр».

НЕФТЬ ЫЙТĂВĔСЕМ ПИРКИ АНГЛИПЕ АМЕРИКА ПĔР-ПĔРИНПЕ КАЛАÇМА ТЫТĂНАÇÇĔ

ВАШИНГТОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Вашингтонра çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи часах нефть ыйтăвĕсем пирки тепĕр хут калаçма пуçлаççĕ. Англи делегацине Бивербурк ертсе пырать, вăл делегацин членĕсем—государство министрĕ Лоу тата горючипе усă курнине контроллесе тăракан камитетăн председателĕ Ллойд. Америка делегацийĕн председателĕ Хэлл пулать, председатель заместителĕ—шалти ĕçсен министрĕ Икес пулать. Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацине тата тинĕс çар министрĕ Форрестол, çар министрĕн заместителĕ Паттерсон, ют çĕршывсенче экономика тĕлĕшпе ĕçлессине ертсе пыракан управленин председателĕ Кроули тата ыттисем те кĕреççĕ.

Д. З. Мануильский—УССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ

КИЕВ, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). УССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Д. З. Мануильский юлташа УССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма тата УССР Совнаркомĕн Председателĕн Заместителĕ пулма лартнă.

А. Е. Корнейчук юлташа УССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленин начальникĕ пулма лартнă

КИЕВ, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). УССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, А. Е. Корнейчук юлташа УССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленин начальникĕ пулма лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

П Ĕ Л Т Е Р Ӳ

Чăваш АССР Наркомземĕ ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

№№	Шкул ячĕ	Адрес	Мĕнле отделенисем пур	Мĕнле квалификаци параççĕ	Миçе çул вĕренмелле
1.	Улатăрти зоотехникум	г. Алатырь, ул. Щорса, 3	1. Зоотехника отд. 2. Бухгалтерипе 3. Кайăк-кĕшĕк экономики	Зоотехник Кайăк-кĕшĕк зоотехникĕ Бухгалтер-инструктор	3 çул 3 „ 3 „
2.	Вăрнарти зооветтехникум	ст. Вурнары, М-каз. ж. д.	1. Зоотехника 3. Ветеринария	Зоотехник Ветеринари фельдшерĕ	3 çул 3 „
3.	Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕ	г. Цивильск, ул. К. Маркса	1. Уйхир отд. 2. Ялхуçалăх механизацийĕ	Уйхир агрономĕ Ялхуçалăх машинисемпе тракторсен механикĕсем	3 çул 3 „
4.	Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелӳпе гидромелиораци техникумĕ	г. Марпосад	1. Çĕрйĕркелӳ 2. Гидромелиораци	Çĕрйĕркелекен Гидротехник	3 çул 3 „
5.	Етĕрнери ялхуçалăх техникумĕ	г. Ядрин	Пахча-çимĕç	Пахча-çимĕç агрономĕ	3 çул
6.	Патăрьелĕнчи ялхуçалăх вăтам шкулĕ	с. Батырево, Чкаловского р-на	Уйхир	Колхоз агрономĕсемпе агротехниксем	2 çул
7.	Вăрнарти ялхуçалăх вăтам шкулĕ	пос. Вурнары	Уйхир	Çавах	2 çул

Ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсенче вĕренӳ кабинечĕсем, лабораторисем, вĕренӳ хуçалăхĕсем, йӳнĕ хакпа апат çитерекен столовăйсем, общежитисем пур, общежитисенче выртса тăмалли вырăнсем пур.

Кĕркуннерен пуçласа техникумсемпе ялхуçалăх шкулĕсем хăйсен 1941 çулччнхи çурчĕсенче вĕренме тытăнаççĕ.

Ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсенче вĕренекенсене стипенди параççĕ, столовăйра рабочисен нормипе апатлантараççĕ, общежитисене вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăнсем параççĕ.

Ялхуçалăх техникумĕсемпе вăтам шкулĕсене арçынсемпе хĕрачасене — вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Туллимар вăтам шкултан е вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен «пятерка» тата «четверка» паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Ыттисен испытани тытмалла пулать.

Вĕренме кĕрес текенсен малта кăтартнă адрессемпе заявленисем памалла, заявленисемпе пĕрле миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство тата хăçан çуралнине кăтартакан справка ямалла. Çав документсене хăйсене ямалла, копийĕсене мар, унсăрăн заявленисене пăхмаççĕ.

Паспортсене кашни хăй кăтартать. Заявленисене сентябрĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Техникумсемпе шкулсенче октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноспа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00260 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.